**Вăйăра юрлаççĕ...**

Вăйăра юрлаççĕ,
Вăйăра ташлаççĕ
Юрласа, ташласа ывăниччен.
Вăйă салансассăн хĕре чуп тăваççĕ
Автансем пĕр виççĕ авăтиччен.
Хам эп юрлаймарăм,
Хам эп ташлаймарăм,
Вăрçăра ирттертĕм çамрăк кунсене.
Эпĕ ыталарăм,
Эпĕ ачашларăм
Автомат дискне те тупă снарядне.
Халь каллех кĕрлеççĕ,
Вăрçă хатĕрлеççĕ
Çамрăксен юнне çырма пек юхтарма.
Çамрăксем, кар тăрăр,
Çамрăксем, сых пулăр,
Хĕрсене ан парăр чĕррĕн çунтарма!

*Сандров, Н. Вăйăра юрлаççĕ...: [сăвă] / Н. Сандров // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 312.*